сс(чув)
947
Ч-35829

И. Я. ЯКОВЛЕВ



# УТĂРА



## АВТАН

Пирĕн пĕр пысăк хĕрлĕ автан пур.
Вăл тăр кăнтăрла урапа çине хăпарать те:
«Кики-рик-ку» тесе авăтать. Сасси аван, хӳри илемлĕ, авăна-авăна тăрать. Кикирикки пысăк, тĕклĕ уралла, качи вăрăм.
Сирĕн автан çапла-и?

## ЛАША ШЫРАНИ

Пĕр çын хăйĕн айĕнчи лашине виçĕ кун шыранă тет. Пĕр яла пырса ыйтать тет:

— Лаша курмарăр-и?— тесе.

— Çук, курмарăмăр,— тесе калаççĕ тет.

Тата тепĕр яла пырса ыйтать тет:

— Лаша курмарăр-и?— тесе.

— Çук, курмарăмăр,— тесе калаççĕ тет.

Çапла ялтан яла тек çӳрет тет.

Çӳресен-çӳресен пĕр ăслăрах çынна тĕл пулчĕ тет те:

— Эсĕ ăçта та пулин ют лаша çӳренине курман-и?— тесе калать тет.

— Çук, курман. Хăçан çухалнă сан лашу?— тесе каларĕ тет.

— Паянхипе виçĕ кун ĕнтĕ ак,— тесе каларĕ тет.

— Лашу мĕн тĕслĕччĕ?— тесе каларĕ тет леш çынĕ.

— Шурă улаччĕ,— тесе каларĕ тет.

— Çак ху айăнтиех мар-и?— тесе каларĕ тет лешĕ.

Хайхи ут çинчен анса пăхрĕ тет те лашине:

— Çакă, çакă, çакă!— тесе каларĕ тет. Лаши çине сиксе утланчĕ тет те савăннипе чуптара пачĕ тет килне.

## ЧĂЛХА ÇЫХНИ

Эпĕ пĕчĕкçĕ чухне пĕрре анне пуçланă чăлхана çыхма тытăнтăм. Çыха пĕлмесĕр çиппине пĕтĕмпе чăлхантарса пĕтертĕм.

Анне çакна курчĕ те:

— Ачам, малтан çыхма вĕрен-халĕ, унтан тин çыхтарăп,— терĕ.

## ЁÇ ÇИНЧЕ

Эпир пĕрре чикĕри ана çинче тулă выратпăр. Эпĕ кĕлте çыхрăм та ăна тĕм çине леçсе хутăм, çав вăхăтра çурлана таçта çухатрăм.

Пăхкалатăп, пăхкалатăп — çук. Çурлана пичче тупнă та каламасăр тăрать. Атте уншăн çилленчĕ те ятла пуçларĕ.

— Ĕç патĕнче вылямаççĕ, ĕç юлать! — терĕ.

Мана тата:

— Кĕлте çыхнă чухне çурлана хулпуççи çине хураççĕ, — терĕ.

## ЧАКАК



Чакак çулла вăрманта пурăнать, юр çусан яла пырать. Çулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать; ялтан çăмарта вăрласа кайса чĕпписене тăрантарать. Хĕлле, сивĕ пулсан, йывăрлăх çине ларать те: «Чак-чакак, чак-чакак» тесе чакаклатать.

## СЎСМЕН ХАКĔ

Пирĕн ялта ĕлĕк пĕр çын пасартан сўсмен илсе таврăннă тет. Ун патне кўрши пынă тет те:

— Сўсменне хаклă патăн-и? — тесе ыйтрĕ тет. Ку каларĕ тет:

— Хакне-мĕнне пĕлмерĕм, аллă пус патăм, — терĕ тет.

## ХĂТА

Пирĕн пата пĕрре çăварнире хăна килчĕ. Пичче ăна:

— Кĕрех пўрте, хуньăм, — терĕ.

Пўрте кĕрсессĕн эпĕ те хăнана хуньăм тесе чĕне пуçларăм.

Аттесем манран кула пуçларĕç:

— Санăн хуню пулмасть вăл, пиччў хунĕ пулать, санăн ăна хăта тесе каламалла, — терĕç.

# УТĂРА

Виçĕ çын утта кайнă тет. Вĕсен лаши лачакана путса ларнă тет. Çыннисем пĕри Каринкке ятлă, тепри Емелкке ятлă, виççĕмĕшĕ Çаманкка ятлă пулнă тет.

Çаманкка калать тет:

— Как быть, Каринкке? Епле тăвас, Емелкке?—тесе калать тет.

Каринкки калать тет:

— Çапла тăвас, Çаманкка!—тесе калать тет. Лашине аран туртса кăларнă тет вара.



— Аçта каятăн, икĕ ура?
— Тăвата урана шырама.
— Аçта каятăн, тăвата ура?
— Ултă урана шырама.
— Аçта каятăн, ултă ура?
— Выртнă упана тăратма.

(Утă капанĕ.)

